43-113
3540

Пĕр дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне çырнă

# ÇЫРУ

УХСАЙ ЯККĂВĔ
сăвăласа çырнă

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1943

Тăван халăх, савнă халăх,
Чаплă кунсене ялан
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Чĕререн сана салам!

Ăмăрткайăк, тăван халăх,
Вăрçăри ачусенчен
Йышăн эсĕ чун-хавалла
Çырăва Дон хĕрринчен.

Дон пек çутă, Атăл евĕр
Сарлака кăмăлпалан
Çырнă сăмахсем кĕрлеччĕр,
Сарăлтăр хĕрӳ салам!

Ял-ял урлă, хир-хир урлă
Янтăратăр ян та ян!
Салама итлетĕр улăх.
Аслă хир, хура вăрман!

Пирĕн çакă юрă ирттĕр
Çичĕ пĕлĕт хушшинчен,

Кăнтăрла та, каç та, ир те
Пултăр халăх умĕнче!

Çакă сырăва вулана
Манайми сехетсенче,
Тăван халăх, вĕçтĕр санăн
Ялаву çил çийĕнче.

Вĕлкĕшке ялав хăпартăр
Куславкка уй-хирĕнче,
Çиçтĕр вăл Çĕрпӳ, Улатăр,
Етĕрне, Вăрнар çинче.

Эх, тăван çĕршыв, аннемĕр,
Шан пире, ĕнен пире:
Аслă Атăлăн илемĕ
Сывă пулĕ ĕмĕрех!

Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Сан хăва сăпку çинче
Ӳссе улăп пек Чапаев
Ишнĕ Атăл шывĕнче.

Чĕр юна тумлам-тумламăн
Хĕрхенмесĕр тăкрăмăр,
Тăкăпăр, анчах та хамăр
Çĕршыва хăтарăпăр.

Хурăпăр пуçа, анчах та
Малалла тăсса алла.
Нимĕç мурĕ вилтĕр, чактăр
Каялла, масаралла!

Ир те, каç та, кăнтăрла та,
Сивĕ чух, тăман чухне
Пуля, мина та граната
Чикĕпĕр тăшман пырне.

Халăхăмăр, савнă халăх,
Çĕртмĕпĕр чăваш ятне,
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Çĕклĕпĕр ун мухтавне.

Хирĕпĕр тăван çĕршывăн
Вĕççĕр-хĕрсĕр хирĕнче
Урнă нимĕç мурĕ сывă,
Куçлă пуçлă юлмиччен.

Пăшала татах та хыттăн
Тытăпăр эпир алла.
Сталиншăн, тăван çĕршывшăн
Утăпăр малтан мала!

* * *

Савнă халăх, эх, аннемĕр,
Чĕререн сава-сава

Вуласам пӗр сиктермесӗр
Пирӗн ҫакӑ ҫырӑва.

Шартлама хаяр хӗл кунӗ
Тӑнӑ чух, Дон хӗрринче
Ҫыртӑмӑр таса юр хӳнӗ
Дзотсенче, блиндажсенче.

Чи тискер тӑшман окопӗ
Умӗнче, малти ретре,
Ҫыртӑмӑр, кӗрхи йӗпе пек
Сирпӗнсе тӑчӗ етре.

Ҫӗр ракета та пӗр уйӑх
Ҫутӑ сапнӑ каҫсенче
Ҫыртӑмӑр эпир Дон уйӗ
Чӗтӗренӗ кунсенче.

Эх, аннемӗр, савнӑ халӑх,
Пӗл эс вӑрҫӑ хирӗнче
Ачусем хӗрсе хастарлӑн
Кӗрешсе пынӑ ҫинчен.

Печӗ пирӗн артиллери,
Ӳхӗрчӗҫ самолетсем.
Шур хута эпир тӗрлер-и?—
Тӗрӗмӗр хӗпӗртесе.

Çырăвăн, кашни сăмахăн
Вăйĕнче пур пирĕн юн.
Юмахри пек урхамахăн
Çĕнтерӳ килет-и йӳн?

Çĕнтерме вăрçа нумайăн,
Пинĕн-пинĕн кĕтĕмĕр,
Утнăçемĕн, пынă майăн,
Халăх, саншăн ӳкрĕмĕр.

Акăш-макăш вăрçă вучĕ
Ашĕнче хыт кĕрешсе
Халăх чысĕшĕн пуç хучĕç
Пирĕн паттăр юлташсем.

Масарсем нумай куратăн
Халь Воронеж хирĕнче, —
Ачусем сан, Аслă Атăл,
Пур унта, санран инçе...

Халĕ лăпкă çывăраççĕ.
Вĕсене лăпканă пек,
Асăннă пекех кашлаççĕ
Вăрмансем çил вĕрнипе.

Таврăнаймĕç, тăван Халăх,
Укнĕ ачусем килне,—

Емĕр ĕмĕр асăнмалăх
Йышăнсам вĕсен чапне!

Çакă çырăва шăрçа пек
Шăрантарнă çынсенчен
Вилнисем те пулĕç,—чапĕ
Юлĕ халăх чĕринче.

Хирсенче тумлана паттăр
Геройсен чĕр юнĕпе
Çырнă çак çыру хăпартăр
Асамат кĕперĕ пек.

Тăван халăх, ăмăрткайăк,
Тĕплĕн-йĕрлĕн калама
Çитейместĕп юрă майĕ,
Тупăнмасть иккен сăмах,

Çырура манни сахал-и,
Пур сиксе те юлнисем.
Вăхăт çитĕ те çуралĕç
Романсем, поэмăсем.

* *
*

Манмăпăр эпир июнĕн
Çирĕм иккĕмĕш кунне,
Астăвăпăр халăх юнĕ
Айăпсăр тăкăннине.

Молотов сасси кёрлерё,
Сарӑлчӗ ҫав кун хыпар:
Вӑр-хурах, тӗнче тискерӗ
Сапса ячӗ шӗл-кӑвар.

Мӑкӑрланчӗ хӳхӗм Киев,
Ҫулӑм сикрӗ Минск ҫинче.
Сӑрханчӗ юн ҫийӗн-ҫийӗн
Ялсенче, хуласенче.

Пӗлӗте витсе кӗрлерӗҫ
Хуп-хура самолетсем.
Сад, дворец, ҫырма кӗперӗ
Пӗтрӗҫ, бомбӑсем ӳксен.

Ахлатса, йӗрсе ӗрканчӗ
Ҫӗр-тӑпра, тӑван анне...
Кӗл, кӑвар та, ишлӗк-ванчӑк
Тӑрса юлчӗ ҫӗр ҫине.

Амӑшсем савса силленӗ
Сӑпкари ачасене
Хӗрхенмӗ вӗлерекенӗ
Сапрӗ вилӗм ҫӑмӑрне.

Вӑр-хурахлӑн ҫаратмашкӑн
Нимӗҫ мурӗ килнӗ чух,

Чикĕрен упа та кашкăр
Тарчĕ, тарчĕ чĕрĕ чун.

Куртăмăр-çке Белостокăн
Хирĕнчи тăрнасене,
Куртăмăр чăлт шурă акăш
Кÿлĕрен çĕкленнине.

Астăватпăр халăх юнĕ
Айăпсăр тăкăннине.
Манмăпăр эпир июнĕн
Çирĕм иккĕмĕш кунне.

Асларан та аслă Сталин
Йыхравне илтсе, эпир
Пĕр çын пек пурте хастарлăн
Харăс тăтăмăр çав ир.

— Манăн ывăлсен хăвачĕ
Çапнине, фашизм, пĕл! —
Терĕ халăх, тумлантарчĕ, —
Тăхăнтăмăр сăр шинель.

Шыв пек тикĕс пирĕн тырă
Сывпуллашрĕ пуç тайса.
Вăрçă çулĕ пултăр ыра,
Юнлă та, анчах таса.

— Нимĕçе вĕлер, тăванăм!—
Терĕ халăх çавă ир,—
Кĕр вута, анчах тăшманăн
Салтакне тапта та ир!

— Нимĕçе пер хĕрхенмесĕр!—
Тесе çырнă енчĕкне
Парнелерĕ чип-чипер хĕр
Кăвар куçлă йĕкĕтне.

— Нимĕçе вĕлер, тăванăм!—
Терĕ хăй упăшкине,
Асатса матур хĕрарăм
Шăлчĕ вĕри куççулне.

— Нимĕçе вĕлер, аттеçĕм!—
Терĕç пирĕн ачасем.
— Нимĕçе вĕлер!—теççĕ
Вăрмансем, çеçен-хирсем.

Каш-кашла, Вăрнар вăрманĕ,
Шавлăр, Елчĕк хирĕсем!
Нимĕçе хирме тухман-и
Аслă Атăл ачисем!..

Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Картăмăр çунатсене,

Чĕпппӳсем, эпир, нумайăн
Вĕçрĕмĕр тăшман çине.

* *
*

Хуп-хура тусан çĕкленнĕ
Кăн-кăвак пĕлĕт таран.
Çавраçил вĕрмест, — çĕленлĕн
Чашкăрса килет тăшман.

Хурçă танкĕсем ирессĕ
Тăпрана, ачасене;
Çĕмĕрсе вĕсем килеççĕ.
Эх, çĕршывăм, сан çине!..

Кайăксем тарса вĕçеççĕ
Тахçанхи йăвисенчен.
Куççулне татса йĕреççĕ
Хĕрӳсем Дунай çинче.

Кашни пит тăван тăпрашăн,
Кашни çуртшăн, йывăçшăн,
Сăпкари кашни ачашăн,
Кашни хĕрĕн чысĕшĕн,

Хăмăр шывшăн та вăрманшăн,
Пурте хамăрăн — тесе
Çапăçрăмăр Хĕрлĕ Çарăн
Улăп пек паттăрĕсем.

Юлташсем çунса кĕлленчĕç
Сывлăшра, танк ăшĕнче,
Хастарланчĕç чун хăвачĕ
Черере лăп сÿниччен.

Аларан ÿксен пăшалĕ,—
Шăл хăйра, сырт нимĕçе!
Çавăн пек герой сахал-и,
Çитмĕл çиччĕ-и, мĭçе?

Пинĕпе вĕсем, нумайăн
Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче!
Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Сан вăю геройсенче!

* *
*

Манмăпăр кĕлленнĕ Киев
Макăрса ăсатнине,
Манмăпăр Днепр çийĕ
Юнланса хĕрелнине.

Халĕ те эпир илтетпĕр
Ирсĕр нимĕç аллине
Лекнĕ халăх тÿсеймесĕр
Ир те, каç та йĕрнине.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Хамăр çиллĕмĕр çинчен

Калама сăмах çитмест мĕн,—
Юн вĕрет чĕресенче.

Хĕрӳсем мăшкăл кураççĕ
Нсмăн шывĕ хĕрринче;
Макăраççĕ, макăраççĕ
Инçетре, Дунай çинче...

Макăраççĕ, ирĕн-каçăн
Чăн тăван Мускав енне
Куç хурса кĕтсе тăраççĕ
Çăлăнăç килессине.

Аслă вăрçă вучĕ витĕр
Хĕрлĕ Çар малтан мала
Пырĕ çапăçса, вăл çитĕ.—
Вĕлкĕшĕ Хĕрлĕ ялав.

Пирĕн халăхăн куççулĕ
Юхнăшăн тавăрăпăр.
Нимĕç урчĕ... Шалçи тулĕ!
Аслати пек çапăпăр.

* *
*

Эх, тăван çĕршыв, аннемĕр,
Пулчĕ вăхăт, кĕркунне—
Гитлер çарĕ килнĕçемĕн
Çитрĕ сан чĕрӳ патне.

Шăннă çĕр çинчен васкавлăн
Кармашса хăмăр танксем
Ухĕрчĕç.—чипер Мускавăн
Инçе мар урамĕсем!..

Пуç усмарĕ пирĕн халăх
Чи хăрушă кунсенче,
Емĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Вăй пуçтарчĕ чĕринче.

Аслăран та аслă Сталин
Ватă Кремльтен приказ
Парсанах, хăват хускалĕ!
Халăх кĕтрĕ ир те каç.

Мускава таптатăп!—терĕ
Хурçă тумлă вăр-хурах.
Пухăнчĕ тăшман тискеррĕн,
Кĕрхи пĕлĕт пек хура.

Курăнмасть хĕрри те вĕçĕ,
Çук вичме сарлакăшне.
Эх, çĕршыв, миçе дивизи
Килчĕ сан чĕрӳ çине?..

Çут мерченлĕ Хĕрлĕ Çăлтăр
Кремль хӳмисем çинче

Сар хӗвел пек йӑлтӑр-йӑлтӑр
Ҫуннине курать тӗнче.

Мӗнле паттӑр, мӗнле улӑп
Сӑнчӑрланӑ хӗвеле?
Ан та тапӑн, вут та ҫулӑм
Касӗ пин хӗҫӗпеле.

Хӗрлӗ ҫӑлтӑра ҫӗр ванчӑк
Салатма Мускав ҫине
Килчӗ Гитлӗр—юнлӑ анчӑк
Юхтарса сӗлехине.

Эх, ҫӗршыв, тӑван аннемӗр,
Эсӗ анлӑ та, анчах
Хӗрлӗ Ҫар, ҫӗршыв илемӗ,
Утӑм чухлӗ те ан чак!

Каялла ҫул ҫук. Мускавӑн
Сарлака урамӗсем
Умӗнчех тӑраҫҫӗ тарӑн
Блиндажсем те окопсем.

Вилӗпӗр, герой шӑмшакӗ
Хурҫӑ тимӗр айӗнче
Лӑчӑртатӗ, нимӗҫ танкӗ
Ванӗ паттӑр умӗнче.

Вилĕпĕр, анчах та юлтăр
Хуласен хули Мускав,
Ун çинче çуталтăр çăлтăр,
Вĕлкĕштĕр хăмаç ялав.

Хурçăран та хытă хурçă
Пул, çĕршыв. тăван анне!
Ой, мĕн чухлĕ Гитлер хучĕ
Полкисен виллисене!..

* * *

Паттăр вăхăт! Кашни кунĕ
Халь те чаплă, малашне
Чаплăран та чаплă çунĕ,
Çырăнĕ историне.

Çав кунсен кашни сехечĕ
Курăнĕ çулталăк пек.
Ма тесен, вĕсен тивлечĕ
Тулнă халăх юнĕпе.

Хĕвеланăç хĕрлĕ тейĕн,—
Юнлă пулчĕ аслă уй...
Çитĕ вăхăт, эпопея
Çырĕ тепĕр Лев Толстой.

Фашистсен çарне хаяррăн
Вакласа тăкса эпир

Утрăмăр пурте пĕр харăс
Ҫăнтăрла та, каç та ир.

Юлташсем вилсен, виç утăм
Утса ӳкрĕç çĕр çине,
Тепĕр хут тăрас пек хыттăн
Тăсрĕçĕ аллисене.

Хирсене салтак масарĕ,
Арăш-пирĕш ушкăн танк
Хăварса тăшман тармарĕ-и,—
Тарчĕ пирĕн Мускавран.

Артиллери—пирĕн «турă»
Пыйтăллă эсрелсене
Шыраса кăларчĕ тӳрĕ
Харсăр вырăс сиввине.

Шартлама хĕл сиввинче.
Фрицсене нӳхрепсенчен
Сĕтĕрсе эпир силленĕ
Шартлама хĕл сиввинче.

Вĕсене эпир кăтартнă
Территори мĕнлине,
Пĕр хăлаç çĕр татса панă,
Ҫапнă, чикнĕ çĕр айне.

Эх, çĕршыв пуян та эсĕ,—
Қашласа ӳсет вăрман,
Нимĕçе пытар хĕрессĕр,
Йĕр ан юлтăр тăшманран.

Ирхине сухаçă кайтăр
Сарлака çеçен-хире,
Юрласа вăл сухалатăр
Нимĕç çĕрнĕ нӳр çĕре.

Сар шăмми тухсассăн, — çаптăр
Çиленсе шур чул çине,
Ĕ шалçа çине тăраттăр
Хăратма чакаксене.

Эх, çĕршыв! Вилес пек мелсĕр
Пулчĕ вăхăт, çичĕ ют
Килчĕ, килчĕ. Эх, аннемĕр,
Тĕксĕмленчĕ шурă юр...

Хуп-хура çăхан карларĕ,
Карăнчĕ Мускав çине,
Пĕр самант та чарăймарĕ
Ватă Кремль сехетне.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Çитрĕ вăхăт, çуркунне

Анчĕ сар хĕвел илемĕ
Çапăçу хирĕсене!

* * *

Мухтансам, чăваш уй-хирĕ!
Ӳхĕр, Атăл, хĕперте!
Ачусем тăшмана хирĕç
Кĕрешеççĕ пур çĕрте.

Савнă халăх, ăмărткайăк,
Харсăр санăн чĕппӳсем,
Хуть ăçта пулсан та, лайăх
Янтăраççĕ ячĕсем.

«Хамăра çуратнă вырăн
Лăпкă халĕ, инçетре...»—
Тенĕ шухăш пулмĕ ырă,
Выртмĕ пирĕн чĕрере.

Белоруç йĕрсен, чăвашăн
Куçĕнче вĕри куççуль.
Çинĕ чух пире—пĕр кашăк,
Утнă чух пире—пĕр çул.

Пĕрле туйнă пĕр телейĕн
Çырлине астивнĕ чух;
Е чăваш-и, е ирçе-и, —
Туслă пулнă, пулнă чух.

Пĕр-пĕрне савса мухтанă
Вырăс та латыш, узбек,
Савăннă, пĕрле юрланă,
Çывăрнă эпир пĕр пек.

Украина куççуленчĕ,
Белоруç тўсет типшар.
Çапăçма чăваш çĕкленчĕ,
Вăркăнать вăрçа тутар.

Тăван халăх, савнă халăх,
Чăвашсем эпир—матур.
Фронтсене пăхса ил халĕ,—
Пирĕн юнăн йĕрĕ пур.

Ленинград панче тумланă,
Тăкăннă Мускав çĕрне,
Чăваш юнĕ мухтавланă
Севастополь хăйăрне.

Украинăн аслă уйĕ
Астăвать чăвашсене.
Сар хĕвел те кĕмĕл уйăх
Курнă пирĕн ĕçсене.

Шавлă Днепрпа Çут Немăн
Шывĕсенче чўхенсе

Çывăраççĕ халь чăвашăн
Паттăр вилнĕ ачисем.

Вилнисем çинче хумханнă
Лĕпкĕ шывăн саламне
Йышăн, çĕршыв, хăвăн анлă
Кăкăрна, чĕрӳ патне.

Савнă халăх, тăван халăх,
Ачусем эпир—матур.
Тăшмана çапса ватмалăх
Пирĕн вăй та, юн та пур.

* * *

Çич ютта хĕлле тылланӑ,
Хирнĕ хыççăн сĕр çине
Килчĕ ешерсе тумланнă
Ырă, çутă çуркунне.

Карăнса шывсем хускалчĕç,
Нимĕçсен виллисене
Тирĕспе пĕрле кăларчĕç
Сирпĕтсе çыран çине.

Тасалса хумсем ача пек,
Сăпкари пек ярăнчĕç.
Çуркуннен ем-ешĕл чапĕ
Сарăлчĕ уй-хирсенче.

Вăрçă вучĕпе аманнă
Йывăç чĕрĕлчĕ ансăт.
Çулçи тухрĕ, пулчĕ анлă,
Çитĕнчĕ папкаланса.

Ашкăрчĕ хупах, сар курăк
Нимĕç виллисем çинче.
Хурткăпшанкă йăва турĕ
Фашистсен пуç шăмминче.

Снарядсем Фрица тĕп тунă
Вырăнта, окопсенчен
Тикĕсленнĕ çĕрсенче
Шăтрĕ лăс пек çăра тулă.

Қăмрăклă, анчах тăван
Çурт çине пăх,—кăвакарчăн
Мамăкран çемçе йăва
Çавăрчĕ, чĕпсем кăларчĕ.

Тар-тăруп шăршисĕр кунăн
Сывлăшĕ епле хитре!
Вăрманта сасси—куккукăн,
Тăрисен—çут пĕлĕтре.

Ухĕрсе хĕлле кĕрлетчĕ
Ирсĕр мина пуç çинче,—

Путене халь чĕп кăларчĕ
Нимĕç хурçă каскинче.

Çутçанталăк та йăлт уçă
Сарăлса чечекленет.
Вăрманта ем-ешĕл çулçă
Хăвăртрах чиперленет.

Халĕ, ирĕклĕх килсен,
Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Янратса юрлаççĕ юрă
Юмахри пекех хĕрсем.

Шăл çыртса эпир хастарлăн
Çапăçса тăвансене
Çăлтăмăр.—эх, питĕ хаклă
Ирĕк пурнăç çынсене!

Малалла! Çул вăрăм халĕ,
Нимĕç вилтĕр! Аркатса
Ќайăпăр. Пире шан, халăх!
Вăрçă юнлă... Хĕç таса!

Малалла халь пирĕн утăм,
Кĕт, Одесса! Кĕт, Литва!
Çĕклĕпĕр хĕвел пек çутă,
Юн пек хĕрлĕ ялава!

* *
*

Çуркунне шап-шур тĕтре
Улăхсем çине ÿксен,
Тĕпсĕр-йĕрсĕр пĕлĕтре
Йĕрсе иртрĕç тăрнасем.

Хыпарларĕç кăнтăрта
Нимĕçсен асапĕнче,
Акăш-макăш сăнчăрта
Халăх тарăхни çинчен.

Юмахри пекех чечен
Садсенче халь шăпчăксен
Илтĕнмеççĕ ир çинче
Янăравлă юррисем.

Ĕлĕк, ăшă çил вĕрсен,
Ухĕрнĕ кипариссен
Айĕнче халь вилесем —
Пирĕн халăх сыннисем.

Хура тинĕс хĕрринче
Халăхăн телейĕ çук,
Урнă нимĕç аллинче
Тăканать вĕри куççуль.

Йынăшса, йĕре-йĕре,
Тăсрĕç хурлă юрăсем

Янкăр уçă пĕлĕтре
Кĕмĕл саслă тăрнасем.

Вĕсем тарнă тарăхса
Нимĕç мурĕ патĕнчен,
Ярăнаççĕ карăнса
Аслă Атăл çийĕнче.

Вĕсене илтсен, питех
Чĕререн хурлантăмăр,
Симĕс сăнлă пĕлĕте
Пăхрăмăр, каларăмăр:

Шинеллĕ тусăрсем тăнлатпăр
Хурланнă йывăр сассăра,
Пăшалсене патвар тытатпăр
Тĕреклĕ, çирĕп алăра.

Хуллен-хуллен эсир иртетĕр,
Ĕшеннĕ мĕн çунатăрсем.
Чуна татса çӳлте йĕретĕр
Эсир, мăнтарăн тăрнасем!

Хĕвеллĕ кăнтăрăн асапĕ
Тулса хумхатнă чĕрĕре
Вакла-вакла,, касса-касса пек
Юрлатăр тĕпсĕр тӳпере.

Çунат сулса пире чĕнетĕр:
Мала! Мала! Мала!—тесе,
Полксем çинчен эсир иртетĕр,
Янравлă саслă тăрнасем!

Çунат сулма пăрахăр, ларăр
Илемлĕ Атăл хĕррине,
Шывра чӳхенĕр те тасатăр
Çунатăрсен тĕккисене.

Полксем, полксем, полксем шăваççĕ.
Тусан куратăр çул çинче.
Штыксем илемлĕ ялтăраççĕ
Ирхи хĕвелĕн çуттинче.

Тăван çĕршыв çинче пĕр чун та
Фашист тавраше юлмиччен
Салтак чĕри кăвар пек çунтăр
Мухтавлă вăрçă хирĕнче!

Шăвалмĕ вăр-хурах çĕленлĕн,
Саланĕç унăн шăммисем.
Тасалĕ çĕр!.. Пире ĕненĕр,
Янравлă саслă тăрнасем!

* * *

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Саранча пек тăшмана

Пĕтерме пĕр хĕрхенмесĕр
Пуçтаратăн ху вăйна.

Хăпарту пулса пиçесшĕн
Мăнтăркка пучахĕпе
Мухтанса хирсем ем-ешĕл
Хумланаççĕ тинĕс пек.

Кăкăр çӳллĕш тутлă курăк
Ӳснĕçемĕн ӳснине
Пăхăр халĕ, витĕр курăр,—
Мухтăр халăх пурлăхне!

Чип-чипер хĕрсем тухаççĕ
Ирхине сар хĕвелпе;
Çависем ян-янăраççĕ,
Янăраççĕ юрă пек.

Пĕлĕт пек кăтра, хаваслă
Сурăх тухнă кĕтӳпе,—
Хĕрлĕ паттăра чăлхалăх
Çăм ӳсет сехечĕпе.

Енесен çилли чара пек
Тулнă, — сĕчĕ çăп-çăра.
Акă пирĕн тылăн чапĕ,
Акă çу—Хĕрлĕ Çара!

Тихасем хăвăрт çар учĕ
Пулассишĕн ир çинче
Кĕçенеççĕ,—сĕлĕ вучĕ
Вылянать мĕн ӳтĕнче.

Боецсем савса туртмалăх
Пăхăр чĕлĕмре çунма,
Блиндажра ялан хăватлăн
Çĕлĕк пек мăкăрланма,

Сарăлса, нумай туратлă
Ахăрса ӳсет табак.
Хытă туртĕ пирĕн халăх.
Тĕтĕм пулĕ кăн-кăвак.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Вĕрирен вĕри сан чун!
Уралти совет этемĕ
Шăратать вăрçа чугун.

Иксĕлми пуян тăван çĕр
Рудинчен пулса каять
Фронталла татти-сыпписĕр
Мина, пуля та снаряд..

Йышлă-йышлă пин бригада
Йĕрĕнчĕк тăшман пуçне

Нимӗрме парать граната
Паттӑрсен аллисене.

Саваӑтран тухать хӑватлӑн
Чулсене сӗве-сӗве,
Ту пек пысӑк, ту пек паллӑ
Аллӑ тонналлӑ Ка-ве.

Ҫӗпӗртен те, Уралтан та
Ирсӗр ҫичӗ ют ҫине
Бомба, бомба, бомба антӑр,
Чиктӗр чӗр тӑпра айне!

Хамӑр алӑ, хамӑр тунӑ
Хурҫӑ кайӑксем инҫе
Ярӑнаҫҫӗ, пин-пин тонна
Вилӗм кашнин ҫийӗнче.

Эх, ҫӗршыв, умра тӑратӑн
Эсӗ паттӑр та хитре,
Яланах хӗрсе тапатӑн
Пирӗн харсӑр чӗрере.

Санӑн ирӗкне сыхласшӑн
Ачусем, эпир, матур.
Ҫапӑҫса вилсессӗн ашшӗ,
Ӳсекен ачи ун пур.

Аслӑран та аслӑ Сталин
Пысӑк вӑрҫӑ уй-хирне
Асатса ярать ак халӗ
Теветкел полкисене.

Вӑрҫӑн пит кӗске приказӗ:
Чап, хисеп—ҫӗнтерӳре.
Эх, ҫӗршыв, аннемӗр, эсӗ
Пехилле, ҫул сун пире!

* *
*

Ҫавраҫил вӗрмест, ҫанталӑк
Янкӑр уҫӑ та уяр.
Пӗлӗтсем витмен сасартӑк
Ешӗл тӑрӑллӑ уя.

Кӑмака ҫинчи пек ӑшӑ
Ҫуллахи ачаш тӗнче.
Ҫук, анчах ытла хӑрушӑ
Ҫутӑ Дон таврашӗнче.

Хуп-хура тусан та ҫулӑм
Ялкӑшать урса анчах,
Сар чечеклӗ тӑвӑр ҫулӑн
Хӗрринче выртать ача.

Хурҫӑ ҫӑхансем ӳсеҫҫӗ,
Шурӑ пӗлӗт хушшинчен.

Сирпĕнсе анса переççĕ
Пысăк пулеметсенчен.

Бомба хыççăн бомба ӳкрĕ
Çын çине, хурал̧т çине.
Тăканать вара мĕн пурĕ, —
Саланать пин пĕрчĕнех.

Çил çинче çӳрет йӳçенкĕ
Çунна çурт-йĕрĕн шăрши.
Мăшкăларĕ нимĕç танкĕ
Сан çĕрне, тăван çĕршыв!..

Куртăмăр эпир Воронеж,
Кив хула кĕлленнине,
Куртăмăр эпир Воронеж
Куççульпе çăваннине.

Илтрĕмĕр эпир Воронеж
Çынписем макăрнине,
Туйрăмăр эпир Воронеж
Йывăр хурлăх чăтнине.

Шупашкар пекех илемлĕ,
Шупашкар пекех тăван.
Вилĕпĕр, анчах илеймĕ
Çичĕ ют, усал тăшман.

Йӳҫӗ тетӗм, пысӑк ҫулӑм
Пӑтрашса тӑнӑ чухне
Вилесен купиййӗ урлӑ
Кӗтӗмӗр вӑрҫӑ хирне.

Шӑхӑрса ӳкет те бомба
Тӑпрана йӑтса аллать,
Каялла пӗрре те ан пӑх,
Малалла ҫеҫ, малалла!

Фашистсем тискеррӗн тухрӗҫ,
Пӗтӗм пӗвӗпе тӑрса,
Килчӗҫ, килчӗҫ,—нимӗҫ мурӗ
Хӑратасшӑн ахӑрса.

Петӗмӗр эпир хаяррӑн,
Ҫултӑмӑр эсрелсене,
Хытӑ тӑтӑмӑр, пӗр харӑс
Тиртӗмӗр штыксем ҫине.

Хамӑр тус вилсен, ун урлӑ
Чӗр юна аша-аша
Утрӑмӑр эпир, сатурлӑп
Сыхласа Воронежа.

Июльте эпир Воронеж
Чысӗшӗн кӗрешнине

Кӗнеке тӑрӑх вӗренӗҫ
Ачасемӗр малашне.

* * *

Элӗксем—Ваҫлей Антонов,
Старшина, чӑваш ҫинчен
Ыр сӑмах ҫӳрет; вӑл тунӑ
Паттӑр ӗҫ—чӗлхесенче.

Коммунист, матур разведчик,
Урнӑ нимӗҫ сехрине
Хӑпартса, кӗрсе ҫӳретчӗ
Яланах тӑшман тылне.

Вӑл кунта хисеплӗ снайпер.
Пысӑк чыс Антонова!
Унщӑн халӗ хӗпӗртетпӗр.
Тивӗҫлӗ вӑл мухтава.

Ҫирӗмшерӗн, хӗрӗхшерӗн
Нимӗҫ самолечӗсем
Тапӑнсан, тинкер тӗллерӗ,
Ячӗ вутлӑ пульӑсем.

Ҫулӑмланнӑ хӑмӑр «Юнкерс»
Тӑсрӗ тӗтӗм ярӑмне,
Чӑлӑш-чалӑш, кӗрӗс-мерӗс
Персе анчӗ ҫӗр ҫине.

Элёксем Васлей Антонов
Сăхана винтовкăпа
Сырлахтарчĕ,—ячĕ унăн
Тухрĕ чăн-чăнах чапа.

Тав—ăна, чи витĕр куçлă,
Пысăк чунлă снайпера!
Нумайланчĕç унăн хыççăн
Снайперсем дивизире.

Çĕрĕн-кунĕн тискер-кайăк
Çамкине çурать самант
Яш сунарçă Николаев,
Шăхасан ачи, сержант.

Снайперсем çинчен кĕскенĕн
Çыртăмăр. Çыру пĕрре,—
Геройсем нумай-çке пирĕн,
Йышлă-çке дивизире.

* * *

Манмĕ ĕмĕрне Воронеж
Июльти çапăçăва!
Çыннисем унпа мухтанĕç,—
Кўртĕç юрăпа сăвва.

Мина, пуля вĕççĕр-хĕрсĕр
Çумăр евĕр çунă чух

Пĕр самант та шикленмесĕр
Тапрĕ пирĕн харсăр чун.

Вилĕм витĕр, тĕтĕм витĕр,
Вилнисем ҫинчен каҫса
Иртрĕмĕр эпир,—хура ҫĕр
Йăсăрланчĕ арпашса.

Пирĕнпе майор Петренко,
Афанасьев комиссар
Таччăн пычĕҫ, пĕр ĕренкĕн,
Ҫума-ҫуммăн, юнашар.

Пирĕнпе Донбасс шахтерĕ
Павел Ульшин капитан—
Туслашса пĕрле ҫӳрерĕ,
Ҫирĕ пĕр котелокран.

Командир Энтри Гаврилов
Курчĕ вут та, курчĕ кĕл.
Патăрьел—Юхма таври вăл,
Вăл Крепков пек теветкел.

Савăнас-и, хĕпĕртес-и
Юхма, сан ачусемпе!?
Чаплăлантăн ĕлĕк эсĕ
Крепков паттăр пулнипе.

Тăшмана хирмешкĕн халĕ
Тăтăн вирлĕн те хăруш.
Ну, эппин, вăю сахал-и,—
Чап çумне тата чап хуш!

Ывăлу Гаврилов—пирĕн
Чаплă йĕкĕт, лейтенант.
Хĕпĕрте, Юхма уйхирĕ,
Янтăрат юрра ян-ян!

Пулчĕ вăхăт, кăнтăрла та
Сар хĕвеллĕ çутă кун
Курăнмарĕ; пирĕн ата
Тĕпĕ пулчĕ хĕрлĕ юн.

Тухрĕ нимĕç, тухрĕ ӳсĕр
Виçĕ хут атакăна.
Автомат татти-сыпписĕр
Сăрăлтатрĕ—тӳс кăна!

Арăслан пек чăрсăр хытă
Тытăçса, çапа-çапа
Сирпĕтрĕмĕр; урнă йытă
Шăл хăйрарĕ-çке çапах.

Командир Гаврилов паттăр,
Патăрьел ачи, чăваш,

Амансан та, ертрӗ харсӑр
Ротӑна ҫапӑҫава.

Сар хӗвеллӗ кӑнтӑр кунӗ
Хуп-хура, кӗрхи каҫ пек, —
Ҫӗрчӗ урнӑ нимӗҫ юнӗ —
Сывлама ҫук шӑршипе.

Ҫӗр ҫинчен те, пӗлӗтрен те
Вилӗм тухнӑ пин... пин... пин...
Хурҫӑ ҫумӑр акӑ ӗнтӗ,
Акӑ вилӗм серепи.

Мина антӑр, бомба ӳктӗр,
Кисренсе чӗтрентӗр ҫӗр,—
Вилӗм витӗр, тӗтӗм витӗр,
Ҫулӑм витӗр иртрӗмӗр

Дзотсене тӑшман пытанчӗ,
Темиҫе пулеметран
Сӑтӑрчӗ те—ҫын сайралчӗ
Пирӗн харсӑр ротӑра.

Пуҫ йӑтма та ҫук. Тӑшманӑн
Вучӗ пӑрлӑ ҫумӑр пек.
Вунҫичри Вавилов Гена
Тӑчӗ пӗтӗм пӗвӗпе.

Пулемет ҫине граната
Вăркăтрĕ. Вилессинчен
Ҫăлăнса ҫĕкленчĕ рота
Малалла ҫĕр ҫумĕнчен.

Кăкăрне ватса ун витĕр
Тухрĕҫ пульăсем нумай.
Ӗмĕрех ятне чап витĕ,—
Ӳкрĕ Гена, яш герой.

Ун ҫине кашни пĕр ывăҫ
Хуп-хура ҫĕр сапрăмăр,
Асăнмаллăх чĕрĕ йывăҫ
Вăрçă хыççăн лартăпăр.

Тус тăпри ҫинче чи таччăн
Алла аллăн тăтăмăр.
Вилнĕ хамăрăн юлташшăн
Тăшмана тавăрăпăр.

Командир Энтри Гаврилов
Чĕнчĕ тепĕр хут пире.
Кайрăмăр татах та вăйлăн
Вут та тĕтĕм витĕрех.

Юлташсем ӳксен, тăмарĕҫ.
Йышăнчĕ ҫĕр вĕсене.

Вилнисен чапне Воронеж
Илчĕ хăй чĕри патне.

Геройсен чапне ачашшăн
Сар, çĕршыв, инçе, инçе!..
Вилĕмсĕр палли чăвашăн
Пур Воронеж хирĕнче.

* * *

Тĕксĕм пĕлĕт мар хăрушă
Анлă лăпкă Дон çине.
Халăх тарнă. Ял-ял пушă.
Йывăр сасă илтĕнет.

Эрешмен пекех хĕреслĕ
Нимĕç танкĕ ÿхĕрчĕ —
Тăкăс хăмăшлă, чечеклĕ
Çутă Донăн хĕрринче.

Автансем те авăтмаççĕ
Ĕлĕкхи пек ирхине.
Çăткăн нимĕçсем чыхаççĕ
Пирĕн халăх пурлăхне.

Хамăра савса чуптунă,
Енчĕк панă хĕрсене
Нимĕç мурĕ мăшкăл тунă,
Çакнă юпасем çине.

Дон çине ăсатрĕ Атăл
Хăй ÿстернĕ сынсене:
— Хытă ирĕр,—терĕ,—ватăр
Нимĕçсен çамкисене!

Çурхи шыв сиксе сулмаклăн
Харсăр, чăрсăр вăркăнать.
Çавăн пек, юратнă халăх,
Кайрăмăр атакăна!

* *
*

Каçхине ытла та шăпчĕ,
Вăрçă çук пекех тĕнче
Лăпкăччĕ, юрлаччĕ шăпчăк
Çĕмĕртлĕх тĕмисенче.

Çăлтăрсен çутти çиçетчĕ
Çулçăсем çинче хитре.
Вĕркелетчĕ пулемечĕ
Нимĕçсен хутран-ситрен.

Тутăхми хĕç пек çут уйăх
Пĕлĕт витĕр ишнине
Курнă Куликово уйĕ,
Савнă унăн çуттине.

Пурçăн та ука йĕнерлĕ
Утаман Донской авал

Ҫакӑ уйӑха тинкернӗ,
Малалла ҫӗкленӗ ал.

— Уйӑха тӑшман ан куртӑр
Вырӑс ҫӗрӗ ҫийӗнче!—
Йӑлт ҫӗкленнӗ ҫивӗч пуртӑ
Пирӗн халӑх аллинче.

Ҫичӗ ют чӑнах та урӑх
Пӑхайман, ун куҫӗнчен
Шӑтнӑ та хумханнӑ курӑк
Вырӑс ҫилӗ айӗнче.

Стенька Разин утаманӑн
Тусӗсем пӑха-пӑха
Кӗр-кӗрленӗ, асӑрханӑ
Кӗмӗл сӑнлӑ уйӑха.

Ытарма ҫук каҫ аванччӗ;
Ҫичӗ ҫӑлтӑр ҫуннине
Леш енчен тӑшман пӑхатчӗ
Вылятса ҫӑткан куҫне.

Ҫакӑ каҫ итлет мӗн нимӗҫ
Пирӗн шӑпчӑк сассине.
Хӑлхине хупла, ҫап, нимӗр,
Шӑтарса кӑлар пуҫне!

Çакă çĕр эпир хăватлăн
Кайрăмăр атакăна.
Ишрĕ, ишрĕ пин-пин ялă,
Каçрăмăр эпир Дона.

Çĕр кисренчĕ, çĕр чĕтрерĕ,
Вутлă çумăр сирпĕнчĕ.
Çапăçу кĕр-кĕр кĕрлерĕ
Лăпкă Дон улăхĕнче.

Ишрĕмĕр эпир пин-пинĕн
Уйăх сăнлă шыв çинче.
Пуля та, снаряд та мина
Вĕçсĕр-хĕрсĕр пĕрхĕнчĕ.

Юлташсем сахал-и анчĕç
Аслă лăпкă Дон тĕпне...
Хĕретсе вĕсем хăварчĕç
Кăпăкланнă хумсене.

Каçрăмăр йĕпеннĕ тумлă
Салтаксем çыран çине.
Тухрăмăр, хăватлă хумлăн
Кайрăмăр тăшман çине.

Çитрĕ ир. Çанталăк пулчĕ
Сар хĕвеллĕ те уяр.

Чи малта хăюллăн пычĕ
Паттăр Хлебников майор.

Етĕрне ачи Голицын,
Политрук, кăвар чĕре.
Паттăррăн тата хăюллăн
Çапăçрĕ малти ретре.

Юлашки вăйĕ-хăвачĕ
Пур таран вăл тăшмана
Сайратса пырса йăванчĕ:
Чап ăна! Мухтав—ăна!

Манмăпăр эпир нихçан та
Кравченко лейтенанта.
Ун çинчен çыру шăрантăр.
Юлтăр, халăх, асăнта!

Амансан та, арăсланăн
Ертрĕ хăйĕн ротине,
Тăкрĕ йĕрĕнчĕк тăшманăн
Наркăмăш пекех юнне.

Йывăр вăхăт килчĕ. Нимĕç
Хупăрларĕ, тапăнчĕ.
—Парăн, вырăс, парăн!—терĕç
Сасăсем мĕнсур енчен.

— Эх, çĕршыв, Тăван çĕршывăм,
Пурăн! — терĕ лейтенант.—
Юн пĕтмен-ха, эпĕ сывă,
Ме, тăшман, эппин тăран!

Пуля хыççăн пуля ячĕ
Иртĕхнĕ тăшман çине.
Ӳкрĕ унăн пистолечĕ
Анлă кăкăрĕ çине.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Сан чысушăн пурнăçа
Парнелетпĕр, кĕрешетпĕр,
Кирлĕ чух хурса пуçа.

Пĕр самант та лăпланмарĕ
Дон хĕрринĕ пĕр ĕрет.
Вилĕм чĕлхипе шавларĕç
Пулемет та миномет.

Иртрĕ кун. Çĕкленчĕ уйăх,
Тĕтĕм витĕр каçхине
Курчĕ сарлака Дон уйĕ
Юнланса хĕрелнине.

Ой, мĕн чухлĕ вилнĕ нимĕç,
Хупнă ĕмĕтсĕр куçне,—

Нихăçан та ĕнтĕ курмĕç
Мĕнешкел каç хитрине.

Ирхине тĕтре чаршавĕ
Сирĕлнĕ-сирĕлменех,
Тухрĕ сар хĕвел, савса вăл.
Пăхрĕ çапăçу хирне.

Днепр çийĕн, Киев урлă
Иртнĕ хулăм пĕлĕтсем
Ярăнаççĕ те хĕнхурлăн
Тăсăлаççĕ мĕлкисем.

Пĕлĕтсем, иртсе ан кайăр,
Чарăнăр Дон хĕрринче,
Уйхире çуса тасатăр
Вилнĕ нимĕç шăршинчен!

* * *

Командир, Канаш чăвашĕ,
Павăл Ильиных сиинчен
Чап çӳрет пирте ачашшăн,
Чап—Воронеж фронтĕнче.

Тăван халăх, савнă халăх,
Унăн ыр хушаматне
Емĕр-ĕмĕр асăнмалăх
Çырса хур чĕрӳ патне.

Ильиных, хăватлă паттăр,
Пирĕн ирĕк самана
Телейне сыхланă харсăр,
Панă хăй вăйне ăна .

Граждан вăрçинче аманнă
Вăл тăвата хут, юнне
Тăкнă хĕрхенмесĕр анлă,
Аслă çапăçу хирне.

Манмăпăр лутра çеç пӳлĕ
Аслă сержанта эпир,—
Юрăра шăранĕ, юлĕ
Çырă куçлă командир.

Дон хĕрри. Çап-çамрăк хырлăх,
Сар хĕвел. Пĕчĕк блиндаж.
Çавăнтан тухса Дон урлă
Каçнă Ильиных юлташ.

Вăл пĕччен хăюллăн кайнă
Ешĕл топăллĕ яла,
Çĕмĕртсем ăна пуç тайнă,
Суннă ырă çул мала.

Нимĕçсем ăна сасартăк
Хупăрланă: «Парăн, русс!»

Ик гранатăна кăлар та,
Ильиных, пуçна ан ус!

— Хěрлě Çарăн командирě
Парăнать-и тыткăна! —
Тенě вăл, ăсатнă хирěç
Пуля, пуля тăшмана.

Автомачě ун кěрленě,
Курăк пек нимěçсене
Сăтăрнă, çапса çěленě,
Пăталанă çěр çумне.

Пěр алли аманнă унăн,
Сылтăмми аманнă ун.
Упаленнě, Павăл шунă,
Вăйě чакнă, юхнă юн.

Ильиных ак сулахайăн
Пенě, пенě, чарăнман.
Сирпěнсе нумай-нумайăн
Ÿкнě, антăхнă тăшман.

Пуля пěтнě. Пěр граната
Нимěç—йытăсем çине
Вăркăннă та, çěр-çěр катăк
Çапнă вěсен ушкăнне.

Нимӗҫсен хура ҫӗленӗн
Хӗсӗнне хаяр унки.
Павӑла, Канащ, илтетӗн-и?
— Сывӑ юл, юратнӑ кил!

Тутисем ун сивӗнеҫҫӗ.
Юн юхать. Нумай суран.
Нимӗҫсем тапа килеҫҫӗ,
Умӗнчех ак-ак тӑшман!

«Пар, ҫӗршыв, хӑват татах та,
Кӑшт кӑна, вилме кӑна!»
Ильиных тӑрать. Граната
Шартлатса ҫех саланать.

Вӑрҫӑ иртӗ. Пурнӑҫ савӑк
Пулӗ пӗтӗм ҫӗр ҫинче.
Гранитран шӑратнӑ Павӑл
Тӑрӗ Донӑн хӗрринче.

* *
*

Мухтанма пулать чӑвашӑн
Ачисем маттурипе:
Сталиншӑн, Тӑван Ҫӗршывшӑн
Кӗрешеҫҫӗ пиҫӗпе.

Мӗнешкел сӑмах тупар-ши?
Юррӑмӑр, янра паян!

Пур хастарлӑ Саша Паршин
Хамӑрӑн Кувакинран.

Комсомолец вӑл, разведчик,
Хӳхӗм ҫамрӑк сӑвӑҫӑ,
«Чӗлхесем» тытма ҫӳретчӗ,
Шикленместчӗ нихӑҫан.

Хир-хир тӑрӑх, уй-уй урлӑ
Хырӑмпа шуса кӑна,
Ҫук тесен те, вӑл ҫӗр ҫухрӑм
Иртнӗ, пенӗ тӑшмана.

Вилӗм тупрӗ йышлӑ нимӗҫ
Саша Паршин пульлинчен.
Чап юрри, янра, ҫӳле вӗҫ
Ҫулӑм пек герой ҫинчен!

Шӑмӑршӑ уй-хирӗ, савӑн,
Хӗпӗрте! Санра—телей!
Харсӑр улӑпу пур санӑн
Вӑл—Можаев Василей.

Вӑл разведчик. Халӗ паллӗ
Унӑн ячӗ фронтчӗпе.
Тӑван халӑх, савнӑ халӑх,
Ӳснӗ вӑл сан сӗтӳпе.

Хуп-хура сём тексём каç-и,
Кăнтăрла е ирхине
Йыхăрать çĕршыв приказĕ
Арăслан пек кĕрешме.

Фрицсене тытать Можаев
Çухинчен те пырĕнчен;
Аллине çакланнă кайăк
Чĕтĕрет ун умĕнче.

Çывăх тусĕ Васçилейĕн—
Николай Фролов сержант.
Вăрçăра этем телейĕ—
Туслăхра. Тусна ан ман!

Вут пекех хĕрӳ те паттăр
Фролова хисеплесе,
Елчĕк çыннисем, мухтанăр,
Юрлăр, Елчĕк хĕрĕсем!

Автоматлă харсăр улăп, —
Тетпĕр чысласа ăна,
Çитмĕл çичĕ хут та пулĕ
Кĕнĕ вăл атакăна.

Тĕксĕм каç сăвать-и çумăр,
Çилтăман-и ӳхĕрет,—

Канаҫсăр Фролов канмасăр
Нимĕҫсем ҫине ҫӳрет.

Нимĕҫ йышлă-и, сахал-и,—
Вăл пăхмасть ăна-кăна,
Вĕресе тăрать вăйхалĕ,
Вăркăнать атакăна.

Пĕтĕмпе тата йĕркеллĕн
Ун ҫинчен калас тесен,
Ҫырмалла яка, илемлĕ
Хулăмкка кĕнекесем.

Ҫĕрпӳртре тĕрленĕ ҫакă
Ҫырури йĕркесенче
Калăпăр эпир пăртаккăн
Елчĕк йĕкĕчĕ ҫинчен.

Фроловпа вуникĕ тусĕ,
Хăй пекех богатырьсем,
Хĕллехи ҫĕр, уйăх куҫĕ
Тĕксĕм пĕлĕтре сӳнсен,

Ансăртран пырса тылланă
Нимĕҫсен батальонне.
Нимĕҫ юнĕпе сăрланă
Лăпкă Дон кăвак пăрне.

Çапăçу хĕрсе хаяррăн
Тăвăллă тĕле çитсен,
Вирлĕ вăхăтра Фроловăн
Пĕтнĕ мĕн патронĕсем.

Нимĕç мурĕ хĕпĕртенĕ,
Ахăрашнă çав самант,
Фролова пăхса тĕлленĕ
Мăнтăр обер-лейтенант.

Тусăмсем, ман хыççăн! — тенĕ
Елчĕк йĕкĕчĕ, герой.
Тепĕр хут кĕр-кĕр кĕрленĕ,
Тепĕр хут юнланнă уй.

Юлашки вунвиç прапата
Нимĕç йыттисем çине
Вăркăннă,—кайса кăна тăр.
Чунилли, леш тĕнчене!

Прикладпа çапса яр çурнă
Обер-лейтенант пуçне
Хăй Фролов,—çапла вăл хунă
Фашиста, хĕреслине.

Паллă унăн паттăр ячĕ.
Генерал ăна саватъ,

Хайён аллине тыттарчӗ
Икӗ орден Фролова.

Чыс, сана, Чапай тӑванӗ!..
Икӗ орден илтӗн эс.
Халӑху санпа мухтанӗ!
Терӗ чаплӑ генерал.

Пур кунта Ҫемен Михайлов,
Рядовой, Канаш ҫынни,
Нимӗҫе вилме пит майлӑ
Минӑсем хураканни.

Ҫамрӑк пек ҫӳрет хастарлӑн
Аллӑри Ҫемен тивчче
Минӑланӑ Лӑпкӑ Донӑн
Сарлака уйхирӗнче.

Ҫапӑҫу чухне ялан вӑл
Чи малта, вут ӑшӗнче,
Ялкӑшать Хӗрлӗ Ялавӑн
Орденӗ кӑкри ҫинче.

Кӗрмешсе эпир Дон урлӑ
Каҫнӑ чух, ҫӗрле пӗрре
Нимӗҫсем чӑтма ҫук хурлӑх
Кӑтартасшӑнччӗ пире.

Улт кĕпçеллĕ миномечĕ
Урнă йыт пек ӳлесен,
Кӳç курми тусан çĕкленчĕ,
Тулхăрчĕç шыв хумĕсем.

Тăшмана хирсе, чакмасăр,
Тăхлан çумăр айĕнче
Пытăмăр, умра-хура сăрт,
Елĕк ялччĕ ун çинче.

Çапăçу хăватлă пулчĕ,
Юхрĕ юн çĕнтерӳре.
Пирĕн аманнисем пурччĕ
Ял хĕрринче пĕр пӳртре.

Йĕрĕнчĕк тăшман снарячĕ
Шăхăрса килсе ӳксен,
Пӳрт сасартăк мăкăрланчĕ,
Чĕлхеленчĕç çулăмсем.

Кантăк, витĕр вăрă майлă
Кĕчĕ талпăнса кăвар.
Рядовой Çемен Михайлов
Чупрĕ пӳрт патне вăр-вăр.

Вăл шинелĕсемпе пĕркерĕ
Хыт аманнă сынсене,

Ӳкереймӗ нимӗç мурӗ
Пусмăр сăнчăрӗ айне.

* * *

Тăван халăх, савнă халăх,
Сан ятна кӗрешӳре
Çӗклерӗмӗр асăнмалăх
Çӳлӗрен те çӳлерех.

Йăтăпăр тата та çӳлӗ,
Çырăпăр историне,
Пулăпăр тата хӗрӳллӗ,
Ямăпăр чăваш ятне.

Вăрçăра чăваш хăравçă
Пулнă тенине илтсен,
Каснă евӗр ыратаççӗ
Пирӗн харсăр чӗресем.

Пӗр хăравçă пулчӗ пирӗн,
Çын çӳп-çапӗ, йӗрӗнчӗк,—
Хăй ятне ярса хăй çирӗ
Çапăçу уй-хирӗнче.

Шăл çыртса хăюллă, хытă
Кăшкăрса атакăна
Кайнă чух, пытанчӗ йытă
Вутсăр хӳтӗ вырăна.

Ӳсӗр нимӗҫсем хăрушă,
Сӗмсӗр тапăннă чухне
Ун окопӗ юлчӗ пушă,
Хăй вăл тарчӗ инҫене.

Нимӗҫ пульлинчен тарсан та,
Хамăр халăх ҫиллинчен
Тараймарӗ вăл,—ҫухалтăр
Пирӗн чысла ҫӗр ҫинчен!

Сарлака Тăван Ҫӗршывăн
Юнсăр ырă хирӗнче
Тырă ӳснӗ чух, вăл сывă
Ҫывăрнă тӳшек ҫинче.

Ҫапăҫса сынсем туяннă
Лăпкă пурнăҫ симӗҫне
Ҫинӗ шеп вăл, самăрланнă,
Пураннă лайăх ун чухне.

Ҫӗршыва тӗнче тăшманӗ
Таптаса тулана чух,
Хӗҫпăшалсăр таракане—
Вăл—ҫӗлен пек ирсӗр чун.,

Пытармасăр юлчӗ ӳчӗ,
Хупланса тусан ăшне.

Ҫитӗр ун ӳтне ҫӗр хурчӗ,
Йыт кышлатӑр шӑммине!

* *
*

Ир те каҫ пире кӗтетӗр,
Аннесем те арӑмсем!
Качӑрсем валли тӗрлетӗр
Хӳхӗм енчӗк, савнисем!

Фашистсен шӑмшакӗ витӗр
Шӑтнӑ курӑк хирсене
Хупланса кӗҫҫе пек витӗ
Хуп-хура окопсене.

Снарядсем хӗрсе кӗрленӗ
Вырӑнта шӑпланӗ ир,
Шӑпчӑк юрлӗ те илемлӗ
Пулӗ тар шӑршисӗр хир.

Ҫитӗ вӑхӑт, Гитлер пуҫӗ
Тӑрӑнӗ юпа ҫине.
Ҫитӗ вӑхӑт, алӑк уҫӗ,
Салтак кӗрӗ хӑй килне.

Нимӗҫ ларнӑ сак-тенкелӗн
Хӑмине вӗри шывпа
Ҫавӗҫ,—хӑнасем йӗркелӗн
Пухӑнӗҫ ҫӗнӗ вӑйпа.

Ун чухне, çĕнтернĕ хыççăн,
Курăпăр ял-йышсене,
Ларăпăр илемлĕ, уçă,
Сарлака кĕрекене.

* * *

Малалла эпир пăхатпăр
Тĕтĕм, çулăм витĕрех,
Пĕр самант та тăхтамасăр
Ыратса çунать чĕре.

Украина, Украина,
Сан çеçенхирĕсене
Тăкăннă куççуль, юн çунă
Хулăм кăкăру çине.

Сан чечек çĕру чăвашшăн
Хамăр çĕр пекех чечен,
Сан çинчен эпир ачашшăн
Илтнĕ Çеçпĕл Мишшинчен.

Ирхине килмест саркайăк
Çеçпĕлĕн тăпри çине,
Тертленсе хĕрсем нумайăн
Юхтараççĕ куççулне.

Аслă Çеçпĕл, халăх чапĕ,
Патриот, кăвар чĕре,

Çĕнтерӳ сехечĕ çапĕ,
Çитĕ эс выртан çĕре.

Сарлака Чернигов уйĕ
Тепĕр хут ешернине
Курăн эсĕ, Çеçпĕл,—туйăн,
Сисĕн ирĕк килнине.

Эсĕ туйăн—Хĕрлĕ Çарăн
Йышĕнчи тăванусем
Мĕнешкел янраççĕ харăс
Сулăмлă утăмĕсем.

Эсĕ, савнă Çеçпĕл, шантăн
Хамăр халăх паттăрне,
Малалла чĕнсе янратрăн
Вилĕмсĕр юррусене.

Чунăмăр, поэт, пире кĕт,
Çитĕпĕр-ха сан патна:
Сирпĕнĕ фашист тĕрекĕ,
Вилĕм тытĕ тăшмана.

* *
*

Малалла кайма Дон карчĕ
Пирĕншĕн яка кĕпер.
Унăн пăрĕ кăвакарчĕ.
Кăвакарчăн тĕсĕ пек,

Кӑмӑллӑ пире хӗл кунӗ—
Уҫӑ, сивӗ, тап-таса!
Хӗрлӗ Ҫар боецӗн юнӗ
Вылянать хастарланса.

Пирӗн халӑх ӗнтӗркет-и
Хамӑр вырӑс сиввинче?—
Вӑй шӑрантӑр, вӑй кӗрлетӗр
Ҫӑмӑл йӗлтӗрсем ҫинче.

Кӑкӑра юрпа ҫӑватпӑр
Нар пек хӗрлӗ тӗс кӗртсе,
Ҫилтӑман атя улатӑр,
Йӑтӑнччӑр хулӑм кӗртсем!

Улпута тухма шутланӑ
Шӑннӑ нимӗҫ сехрине
Хӑпартать, памасть хӗл-канӑҫ
Кӑнтӑрла та ирхине.

Пирӗн мина та, снаряд та
Ҫӗтӗк-ҫатӑк тӑшмана
Тӑлпалать те, вӑтӑр-ватӑр,
Татӑк-кӗсӗк вӑркӑнать.

Кӑмрӑк пек тӗксӗм хура ҫӗр,
Ансӑртран пыра-пыра

Фрицсене пĕр хĕрхенмесĕр
Пĕтерсе тăк блиндажра.

Çухаран тытса килетпĕр
Окопран нимĕçсене,—
Йĕркипе пире пĕлтерччĕр
Секретлă хыпарсене!

* * *

Асларан та аслă Сталин
Полководец сăмахне
Чĕрере тытатпăр халĕ,
Пурнăçлатпăр приказне.

Çут хĕвел, тăван аттемĕр,
Ертнипе эпир ялан
Тăшмана çапса çĕнмесĕр
Нихăçан та чарăнман.

Граждан вăрçинче унпаччĕ,
Стройкăра — унпа эпир.
Пирĕнте тĕнче хăвачĕ—
Аслă Сталин, командир.

Çĕнĕпĕр, телей хăпарĕ
Асамат кĕперĕ пек.
Пирĕнпе Британи çарĕ,
Америка пирĕнпе.

Шанчăкăмăр пысăк пирĕн:
Пирĕнпе пĕтĕм тĕнче.
Нимĕç тарчĕ Ливи хирĕн
Типĕ хăйăрĕ çинчен.

Эс, Çĕршыв, сикми тăратăн
Гранитран шăратнă пек.
Мухтанатпăр Сталинградăн
Фронтĕнчи çĕнтерÿпе.

Каç та, ир те, çĕрĕн-кунĕн,
Пĕтерсе фашистсене,
Тасататпăр Лăпкă Донăн
Сарлака çеçен-хирне.

Тăван халăх, ăмăрткайăк,
Эсĕ шан ачусене:
Тĕнчере пĕлеççĕ лайăх
Теветкел чăвашсене.

Вырăсăн, марин, тутарăн
Çулĕ, шухăшĕ пĕрре.
Çавăнпа пыраç хастарлăн
Яланах кĕрешÿре.

Малалла! Çил вĕр, мала вĕр,
Хыпарла тăвансене:

Çитĕпĕр, çĕнӳ ялавĕ
Кĕрĕ Киев урамне!

Малалла! Çап-çута уйăх,
Йыхравла тăвансене:
Курĕ Белоруссии уйĕ
Пирĕн харсăр полксене.

Малалла! Хĕвел кăварĕ,
Пĕлтерсем тăвансене:
Çитĕ кун, уяв хыпарĕ
Кишиневăн урамне.

Малалла! Хĕвелпек пытăр
Пирĕн алăри ялав!
Аслă Сталин сывă пултăр!
Аслă Сталина мухтав!

Ку сыпăва 1942 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче, наступление каяс умĕн, Дон хĕрринче тăнă чăваш боецĕсемпе командирĕсен митингĕнче йышăннă.

---

Редактор С. Эльгер.

НТ 252. Подписано к печати 13-X-43 г. Зак. № 973
Объем 2,25 п. л. Тираж 1.500 экз.

г. Чебоксары. Типография № 1 Управления
полиграфпром. при СНК ЧАССР.

Цена 3 руб.

Письмо бойцов и командиров Н-ской дивизии чувашскому народу
на чув. языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ — 1943

г. ЧЕБОКСАРЫ